# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

81 (7398) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçченĕсен кунĕ

### *Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен хисеплĕ ĕçченĕсем!*

***Савăнăçлă уявпа – Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен кунĕ ячĕпе чи ăшă салам сăмахĕсем йышăнса илсемĕр.***

***Паянхи кун ăнăçлă ачалăх тата ачан малашнехи кун-çулĕ сирĕнтен, шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçченĕсенчен, сирĕн ăс-хакăл пуянлăхĕнчен, ыр кăмăллăхран, чăтăмлăхран, ачасем тĕлĕшпе тимлĕ пулнинчен килет. Сирĕн ĕç нумай енлĕ тата профессионализм, ачасем тĕлĕшпе пысăк тимлĕх ыйтать. Эсир хăвăрăн воспитанниксен пурнăçне тулли те интереслĕ тума, вĕсен фантазине, тĕнче курăмне аталантарма тăрăшатăр. Эсир юратнă ĕçе хăвăрăн чуна хыватăр тата куллен ачасене чĕре ăшшине паратăр. Эсир ачасемшĕн амăшĕсем пек тăрăшни, ачасене пĕтĕм ыррине пама пулни, вĕсене малашлăха çул уçса пани чăннипех те пархатарлă.***

***Сире хăвăрăн ырми-канми йывăр ĕçĕршĕн чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп.***

***Сире пурне те оптимизмпа юрату, ăнăçусем тата хавхалану, ырлăх-сывлăх тата телей сунатăп.***

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ĕç çи – 2006

### Районти хуçалăхсенче çĕр улми кăларас, кĕрхи культурăсем акас ĕçсем мĕнле пынине кăтартни

***Цифрăсен колонкисенче: 1. Çĕр улми кăларнă. 2. Кĕр аки иртттернĕ (процентпа).***

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 50 | 66 |
| «Волга» | 50 | 94 |
| «Восток» | 100 | 129 |
| «Герой» | 97 | 62 |
| «Динамо» | 40 | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 80 | 40 |
| Ильич яч. хис. | 64 | 77 |
| «Колос» | | 0 |
| Ленин яч. хис. | 66 | 87 |
| «Лидер» | 25 | 0 |
| Мичурин яч. хис. | | |
| «Нива» | | 30 |
| «Оринино» | 89 | 58 |
| «Передовик» | 43 | 45 |
| «Свобода» | 45 | 97 |
| «Сеятель» | | 172 |
| Суворов яч. хис. | 50 | 76 |
| "Рассвет" АФ | | 140 |
| "Нива" АФ | | 70 |
| "Ударник" | 52 | 120 |
| "Хлебороб" | | 32 |
| Чапаев яч. хис. | 86 | 110 |
| "Чемеево" | 50 | 74 |
| Чкалов яч. хис. | | 140 |
| Районĕпе | 50 | 72 |

**Районти хуçалăхсенче çĕр улми кăларас ĕçсем анлă сарăлнă. Сентябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне ăна 682 гектар çинчен кăларнă.**

**Кĕрхи культурăсене 3655 гектар акса хăварнă.**

**Сĕртме сухи 3721 гектар çинче туса иртттернĕ. Е. Андреев яч. хис., «Восток», «Герой», Ленин яч. хис., «Оринино», «Свобода», «Рассвет», «Ударник» хуçалăхсенче ку ĕç аван пырать.**

## Раççейре

### Пулă ĕрчетесси – наци проекчĕ

Тунти кун Дмитрий Медведев вице-премьер агропромышленноç комплексне аталантарас наци проекчĕн виçинче пулă ӳстерессине уйăрма кирлине палăртнă. Мĕншĕн тесен çулленех çĕршывра пулă тытасси чакса пырать. Кун пирки вăл Астрахань облаçĕнче пĕлтернĕ.

### Судьясен ĕç укçи ӳсет

Тунти кун РФ Аслă сучĕ çумĕнчи суд департаменчĕн генеральнăй директорĕ Александр Гусев çывăх вăхăтрах Раççейри судьясен ĕç укçийĕ 100 пин тенкĕ таран ӳсессине пĕлтернĕ. Çакăншăн судьясен хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пымалли çеç юлать.

### Ачасенчен налук тытмаççĕ

Демографи проблеми наци проекчĕ пулса тăчĕ. Ăнсăртран мар, юлашки 10 çулта çĕршывра халăх йышĕ 3,5 хут чакрĕ. Патшалăх çак йывăрлăхран тухма палăрăмлă утăмсем тăвать. Вĕсенчен пĕри – амăшĕсене ача çуралсан ĕçрен пĕр хут паракан пособирен (8 пин тенкĕ) малашне налук тытма пăрахаççĕ.

## Ватă çынсен кунĕ умĕн

### Ваттисене сума суса

Октябрĕн 1-мĕшĕ – Ватă çынсен кунĕ. Çак кун пире тепĕр хут аслă ăрури çынсене пулăшасси, хисеп тăвасси, вĕсен ватлăхĕ канлĕ пуласси пирĕнтен килни, çакă пирĕн кулленхи тивĕç пулса тăни пирки асилтерет.

Районта çак куна хатĕрленсе ирттерессипе ĕç планĕ хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн кашни ял тăрăхĕнчех ватă çынсене сума суса иртекен уявсем сентябрĕн 28-мĕшĕ – октябрĕн 1-мĕшĕнче пулаççĕ. Çак кун ватă çынсене ăшă сăмахсемпе пĕрлех районти культура ĕçченĕсем концертсемпе савăнтарĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунне халалласа тата аслă ăрури çынсене социаллă пулăшу парас тĕллевпе ятарлă йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн сентябрĕн 29, 30-мĕшĕсенче тата октябрĕн 1-мĕшĕнче ватă çынсене парикмахерскисенче çăмăллатнă хакпа тата фотоательесенче çур хакпа пулăшу пама сĕннĕ. Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх МУП ватăсене тӳлевсĕр çăвăнтараççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Иван Никитин уйрăм предприниматель автобуспа мĕн пур маршрутсемпе ватă çынсене тӳлевсĕр илсе çӳрет.

**Л. ТУКТИНА.**

## Республикăра

### Республика кунĕ Куславкка районĕнче иртĕ

"Çанталăк лайăх тăни ĕçсене хăвăртлатма май пачĕ, республикăра тĕш тырă пухса кĕртесси вĕçленсе пырать", - пĕлтернĕ ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе кунсерен йăлана кĕнĕ планеркăра.

Республикăн Ял хуçалăх министерствин прогнозĕсем тăрăх, ял хуçалăх предприятийĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ĕçе пĕлсе йĕркелесен çĕр улми пухса кĕртессине те аван уйăхĕнче вĕçлеме май пур. Чăваш Ен Президенчĕ Министрсен Кабинетне тата районсен пуçлăхĕсене тивĕçлĕ хушусем панă.

Николай Федоров 2007 çулта Республика кунĕн мероприятийĕсене иртермелли конкурсра Куславкка районĕ çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ. Çак кунсенчех Чăваш Ен Президенчĕ тивĕçлĕ Указа ала пусĕ. "Куславкка районĕ – Чăваш Ене шыв тăрăх килмелли çула тата илĕртӳллĕрех, района хăйне çынсене пурăнмашкăн тата хăтлăрах тумалли япăх мар адрес"- палăртнă Николай Федоров.

Раççейĕн Федерацин физкультурăпа спорт агентствин коллегийĕн йышăнăвĕпе чăваш кĕрешĕвне çĕршывăн спортăн наци тĕсĕ тесе йышăннă. "Çак йышăну кĕрешĕве аталантарма пулăшĕ", - çирĕппĕн палăртрĕ Николай Федоров, кăçалхи çу уйăхĕнче Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен канашăн спортăн халăх тата наци тĕсĕсене аталантарас енĕпе ĕçлекен ушкăнĕн президиумне ертсе пыма шаннăскер.

Канашлура Чăваш Енĕн тĕп хулин архитектура сăн-сăпатне йĕркелессипе, хăвăрт утакансен 2008 çулхи Тĕнче кубокне хатĕрленессипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă.

**ЧР ПА пресс-службиĕ.**

## Ĕçлĕ тĕл пулусем

### Вырăнти влаç реформин ыйтăвĕсемпе

Чăваш Республикинче кăна мар, Раççейре те пуçласа пĕрремĕш хут «Вырăнти влаç реформи: каялла çыхăну» проект ăнăçлă пурнăçа кĕчĕ. Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсен, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕсен **Константин Косачевпа Павел Семеновăн** пуçарăвĕпе Мускавра «çавра сĕтелсем» пулса иртнĕ. Вĕсенче вырăнти самоуправлени реформине пурнăçа кĕртнĕ май тухса тăракан актуаллă тата çивĕч ыйтусене сӳтсе явнă. «Вырăнти влаç реформи: каялла çыхăну» проекта пурнăçа кĕртес ыйтупа Чăваш Республикин делегацийĕсем Мускава пĕрре кăна мар кайса килнĕ. Проекта пула Чăваш Республикинчи хуласемпе районсен пуçлăхĕсем Мускаври «çавра сĕтелсен» ĕçне хутшăнма пултарнă.

Чăваш Енĕн хуласемпе районсен пуçлăхĕсем Раççей Президенчĕн Раççейĕн федераллă хутшăнусем тата вырăнти самоуправлени тĕлĕшĕнчи законодательствине çĕнетсе улăштарас ыйтусемпе ĕçлекен советникĕпе Сергей Самойловпа тĕл пулнă. Кунпа пĕрлех Раççей Патшалăх Думин комитечĕсен председателĕсемпе: аграри ыйтăвĕсемпе – Геннадий Куликовпа, вĕрентӳпе наука ыйтăвĕсемпе – Николай Булаевпа, Федераци тата регионсен политикин ыйтăвĕсемпе – Виктор Гришинпа тата ыттисемпе ĕçлĕ калаçусем пулса иртнĕ. Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем хушшинче малтисенчен пĕри 2006 çултан тытăнса вырăнти влаç реформине пурнăçа кĕртме тытăннă. Республикăри хуласемпе районсен пуçлăхĕсен пĕрремĕш ушкăнĕ февраль уйăхĕнчех Мускава тухса кайнă. Вырăнти самоуправлени представителĕсен тĕрлĕ ыйтусем сахал мар пухăннă: вырăнти бюджет ыйтăвĕсенчен тытăнса архив ĕçĕсем таранах. Пур ыйтусем çине те вĕсем Мускавра чи çӳллĕ шайра хуравсем илме пултарнă.

Юлашкинчен çул çӳревре Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле хулисен, Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар районĕсен пуçлăхĕсем пулнă. Делегацие Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçи Энвер Аблякимов ертсе пынă.

Канаш хула пуçлăхĕ **Валентина Полукарова** палăртнă тăрăх, Патшалăх Думин ертӳçисемпе калаçнă май вĕсем регионсене аталантарассин проблемисене татса парассипе чăннипех те çине тăни палăрнă. Пур ĕçхĕл сферин информацийĕсене те лайăх пĕлсе тăраççĕ, Раççейшĕн чăннипех те чунтан тăрăшаççĕ. «Çавра сĕтел» хушшинчи калаçусем информаци тĕлĕшĕнчен пуян тата икĕ еншĕн те усăллă иртнĕ. Вĕсем шухăшлавăн çĕнĕ шайне çĕкленме май параççĕ, лару-тăру çине анлăрах пăхма, ыйтусене объективлăрах хаклама пулăшаççĕ.

Кунсăр пуçне республика делегацийĕ Регион аталанăвĕн министерствинче пулнă, Чăваш Республикин 2020 çулчченхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕн презентацине хутшăннă. Вăл вара федераллă шайра та пысăк хака тивĕçнĕ. Стратеги муниципаллă пĕрлешӳсене те пырса тивет. Валентина Ивановна çапла калать: «Кун пек самантра хамăр республикăшăн чăннипех те мăнаçланатăн. Пирĕн республикăра нефть тата газ запасĕсем çук пулин те, унăн çитĕнĕвĕсем курăмлă, чылай енпе ытти регионсенчен малта пырать. Çакă вара малашне тата ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхалантарать.

Çĕмĕрле район пуçлăхĕ **Владимир Мурашкин** та кун пек тĕл пулусем иртернипе кăмăллă, вĕсем кирлĕ тата питĕ усăллă тесе шутлать. Патшалăх Думин комитечĕсен председателĕсем лару-тăрăва шалтан лайăх курса пĕлсе тăраççĕ. Малтанах вара Мускавра ялта, аякра мĕн пулса иртни пирки пĕлсех каймаççĕ текен шухăш анлă сарăлнă пулнă. Пĕрремĕш тĕл пулусемех ку шухăшсене сирнĕ. Мускав чиновникĕсемпе пирĕн вырăнсенчи ертӳçĕсен шухăш-туйăмĕсем пĕр пекех иккен. Уйрăмах Раççей Президенчĕн советникĕпе Сергей Самойловпа тата аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет председателĕпе Геннадий Куликовпа тĕл пулни асра юлнă. Владимир Алексеевич çавна та палăртнă. Федераллă шайра хăш-пĕр полномочисене Раççей Фдерацийĕн субъекчĕсене шанса парас шухăш та пур. Сăмахран, çут çанталăк ресурсĕсене сыхлассине тата вĕсемпе усă курассине. Федераллă шайра пирĕн республика тĕлĕшĕпе шухăш-туйăмсем япăх мар. Кунта вара Чăваш Республикин Президенчĕн, республикăн ĕç тăвакан тата законодательственнăй влаç оранĕсен представителĕсен, кунпа пĕрлех «Единая Россия» фракцин Чăваш Республикинчи Патшалăх Думин депутачĕсен тӳпи пысăк.

Вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем пирки калакан федераллă саккуна улшăнусем те кĕртеççĕ. Вĕсенче Чăваш Енри хуласемпе районсен пуçлăхĕсен сĕнĕвĕсене те шута илĕç.

## Райадминистрацире

### Хастар ĕçшĕн – Хисеп грамотисем

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, вĕрентӳ ĕçченĕсен районти организацийĕн канашĕ, «Росгосстрах-Поволжье» – «Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăн Муркашри страхлакан пайĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн сентябрĕн 21-мĕшĕнчи 398 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Светлана Аристарховна ЗАДОНСКАЯНА,** шкул çулне çитмен ачасен «Радуга» учрежденийĕн воспитательне;

– **Нелли Валериановна ИВАНОВАНА,** шкул çулне çитмен ачасен «Золушка» учрежденийĕн воспитательне;

– **Неонила Степановна ХЛЕБНИКОВАНА,** шкул çулне çитмен ачасен «Путене» учрежденийĕн воспитательне;

– **Надежда Фадеевна ЯШКОВАНА,** шкул çулне çитмен ачасен «Буратино» учрежденийĕн заведующине.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Раиса Михайловна ШИШКИНАНА,** район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн секретарь-делопроизводительне.

3. Ĕçри пысăк производствăпа финанс кăтартăвĕсемшĕн:

– **Зоя Михайловна АТЛАСКИНАНА,** «Росгосстрах-Поволжье» – «Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăн Муркашри страхлакан пайĕн операционистне;

– **Владимир Пантелеймонович ИЛЛАРИОНОВА,** «Росгосстрах-Поволжье» – «Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăн Муркашри страхлакан пайĕн страховани агентне;

– **Нина Андреевна КАЛАШНИКОВАНА,** «Росгосстрах-Поволжье» – «Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăн Муркашри страхлакан пайĕн страховани агентне.

4. Район çыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Сергей Михайлович ВАНЮКОВА,** ĕç ветеранне.